«Сывлăх» наци проекчĕ

Çынсем сывлăхлă пулччăр

Иртнĕ çул районта çынсен сывлăхне сыхлас ĕçе ЧР Президенчĕн 2010 çулччěнхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн комплекслă программипе килĕшӳллĕн туса пынă. Пирĕн ĕçре тĕп принцип çапла: чир-чĕре асăрхаттарасси ăна сыватассинчен ансатрах. Кунта сывă пурнăç йĕркине тытса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Н.В. Федоров Президент палăртнă тăрăх, сывă çынсем кăна активлă ĕçлеме, çапла майпа наци пуянлăхне ӳстерсе пырса пурнăç шайне хăпартма, малашлăха çирĕппĕн пăхма пултараççĕ. Интереслĕ ĕçпе пысăк ĕç укçи ун пекех пĕлтерĕшлĕ мар. Сывлăх пулмасан вĕсем пĕр кунтах хăйсен пĕлтерĕшне çухатма пултараççĕ. Çынсен сывлăхĕ вара экономика аталанăвĕн тĕп çăл куçĕсенчен пĕри пулса тăрать. «Единая Россия» парти те çакна малти вырăна хурать.

Вăрттăнлăх мар, хальхи вăхăтра сывлăх ытларах укçа-тенкĕ калăпăшĕнчен, мĕнле çурт-йĕр условийĕсем пулнинчен, пĕлӳ шайĕнчен, тавралăхран килет. Урăхла каласан çынсен сывлăхĕ кулленхи пурнăçпа çыхăннă. Общество пурнăçĕн сферинчи условисем ун çине тӳрремĕнех витĕм кӳреççĕ. Сывлăх сыхлавĕн, вĕрентĕвĕн, пурăнмалли çурт-йĕр политикин тата агропромышленность комплексĕн ыйтăвĕсем кашни çыннах пырса тивеççĕ.

Сывлăх сыхлавĕ тĕлĕшĕнчи приоритетлă наци проекчĕ отрасльти тĕп улшăнусен пĕрремĕш тапхăрĕ пулса тăрать. Ку улшăнусем сывлăха сыхлас ĕçри чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама кирлĕ пулнă. «Сывлăх» наци проекчĕн тĕп тĕллевĕсем – çынсем пурте медицина пулăшăвĕпе туллин усă курма пултарни, сывлăх сыхлавĕн пуçламăш звенин пурлăхпа техника базине çирĕплетесси, кадрсемпе лайăхрах тивĕçтересси.

Наци проекчĕн тĕрлĕ енĕсенчен çаксене палăртса хăвармалла:

– пуçламăш медицина пулăшăвне аталантарасси (кунтах пĕрремĕш сыпăкри медицина ĕçченĕсене хатĕрлесси, ĕç укçине ӳстересси, пурлăхпа техника базине çирĕплетесси т. ыт. те кĕреççĕ);

– çынсене пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвĕпе тивĕçтересси;

– информаци пулăшăвĕпе усă курасси.

Çуллен тĕрлĕ программăсене пурнăçа кĕртме сахал мар укçа-тенкĕ уйăраççĕ. Кусем пĕтĕмпех çынсен сывлăхне сыхлассин пахалăхĕ çине витĕм кӳреççĕ.

Хальхи вăхăтра çынсем вилессин шайĕ ытларах ватлăхпа çыхăннă. Ку вара нумайрах чухне чĕрепе сосудсен чирĕсемпе чирленинчен килет. Енчен те 2004 çулта юн çаврăнăшĕн чирĕсенчен 338 çын вилнĕ пулсан, 2006 çулта – 354 çын.

Тĕрлĕ инкексене, наркăмăшланнине пула вилекенсем те сахал мар. Уйрăмах ĕçлеме пултаракан арçынсем ытларах чухне пурнăçран уйрăлса каяççĕ. Енчен те 2006 çулта 664 çын вилнĕ пулсан, 205-шĕ (30,8 процент) ĕçлеме пултаракансем тата 205 çынран 171-шĕ – арçынсем е 83,4 процент. Сывламалли органсен чирĕсемпе, ытти енпе вилекенсем те çук мар.

Чĕрепе сосудсен тата онкопатологи чирĕсене аталанма ытларах чухне тĕрĕс мар апатланни, пирус туртни, сахал хусканусем туни майсем туса параççĕ. Çавăнпа та районта 2005 – 2007 çулсем валли пирус туртассине чакарассипе тĕллевлĕ программа туса хатĕрленĕ.

Алкоголизм – сывлăха сыхлас ĕçре кăна мар, кулленхи пурнăçра та тĕп ыйтусенчен пĕри. 2002 çулхи декабрь уйăхĕнче ЧР Президенчĕ алкогольпе усă курассине тĕрĕслесе тăрассине, ку енĕпе профилактика мероприятийĕсене лайăхлатассипе указ йышăнчĕ. Указа пурнăçа кĕртессипе туса хатĕрлемелли ĕçсен планне туса хатĕрленĕ.

Наркотиксемпе усă курасси те ӳссе пына вăрттăнлăх мар.100 пин çын пуçне вăл 5,4 çынпа танлашать. Пирĕн районта ку ыйту ытти регионсенчи пекех ытлашши çивĕч мар пулин те, çакă лăпланса лармаллине пĕлтермест. Пирĕн районта ВИЧ-инфекциллисене 5 çынна тупса палăртнă. Вĕсенчен пĕри 2002 çул вĕçĕнче вилнĕ, тепри район тулашне тухса кайнă. Виççĕмĕшĕ инфекци кабинетĕнче «Д» учетра тăрать. Татах тепĕр иккĕшĕ – амăшĕпе унăн ачи – районтан тахçанах тухса кайнă.

Хронически чирсенчен чи анлă сарăлнисенчен пĕри туберкулез шутланать. Çак чирпе чирлессине чакарассипе районта 2005 – 2007 çулсем валли тĕллевлĕ программа туса хатĕрленĕ. Вăл япăх мар пурнăçланса пырать.

Ачасен сывлăхне сыхласси яланах тĕп вырăнта шутланнă. Ку тĕлĕшпе профилактика мероприятийĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк. «Сывлăх» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн ачасене В гепатитран, хĕрлĕхенрен, полиомиелитран, грипран вакцинаци ирттерессине йĕркеленĕ. 2006 çулта В гепатитран 17 çула çитичченхи 5528 ачана, хĕрлĕхенрен 1603 ачана, полиомиелитран 20 ачана прививка тунă. Ку ĕç кăçал та пырать.

Кĕçĕн çулхи ачасен сывлăхне сыхласси пысăк ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. 3 уйăхран тытăнса ачасене невропатолог, окулист, ортопед, 1 çултан тытăнса стоматолог тата отоларинголог пăхса тăраççĕ. Специалистсем хăйсен пĕлĕвне квалификацие ӳстермелли курссенче туптаççĕ.

Çавна каласа хăварасшăн. Çын сывлăхĕ чи хаклă пуянлăхсенчен пĕри пулса тарать. Уншăн тăрăшасси – пирĕн чи пĕрремĕш тивĕç.

В. ДАНИЛОВ,
районти тĕп больницăн тĕп врачĕ,
ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ,
«Единая Россия» фракци членĕ.

Район прокуратуринче

Ĕç саккунне пăхăнмалла

Хальхи вăхăтра район прокуратури ĕç законодательствине епле пăхăннине тĕрĕслесе тăрать. Ытларах çакă уйрăм предпринимательсем хăйсен ĕçченĕсемпе ĕç килĕшĕвĕсем тунипе çыхăннă. Килĕшӳре отпусксем парассин, тĕрĕслев вăхăтне палăртассин ыйтăвĕсене кăтартмалла. Унсăрăн çакă саккуна пăхăнманни пулса тăрать. Куншăн чи малтанах ĕç паркан ответлă пулса тăрать, вăл ĕçлекенпе килĕшӳ тума тивĕç. Ĕçлекенпе ĕç килĕшĕвĕ туманшăн предпринимательсене РФ Административлă майпа правăна пăснин кодексĕн 5.27 статйипе килĕшӳллĕн административлă майпа ответ тыттарма пăхнă.

Д. ВИКТОРОВ,
район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.

РФ Пенси фондĕнче

Çĕнĕрен шутланă

2007 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçлекен пенсионерсен ĕç пенсийĕн страхлакан пайне çĕнĕрен шутласа панă. Хушма тӳлевсем пенсионерсен пĕр пек мар. Районĕпе ĕçлекен 572 пенисонерăн пенсине çĕнĕрен шутласа панă. Вăтамран пенси виçи 62 тенкĕ те 72 пус хăпарнă. Кунпа пĕрлех 1053 ĕç пенсийĕн страхлакан пайне корректировка тунă. Çапла вара 22 пенси вăтамран 3 тенкĕ те 64 пус ӳснĕ, 25 пенси 3 тенкĕ те 49 пус чакнă, 1006 пенси унченхи шайрах юлнă.

Шкул ачисен çуллахи канăвĕ

Икĕ лагерь ĕçлерĕ

Пурте кĕтнĕ çу кунĕсем çитрĕç, анчах Сыпай шкулĕнче вĕренекенсем шкулпа сывпуллашма васкамарĕç. Кунта ачасене пĕр харăсах икĕ лагерь кĕтрĕ: "Задорный" ĕçпе кану тата "Надежда" экологи лагерĕсем. "Задорный" лагере кĕçĕн класра вĕренекенсем кăмăллăсах çӳрерĕç. Ачасен канăвĕ пур енчен те интереслĕ пултăр тесе Т.В. Кудряшова, С.А. Попова тата В.М. Яковлева сахал мар вăй хучĕç.

Çут çанталăка юратакансене вара "Надежда" экологи лагерĕ пĕр туслă ушкăна чăмăртарĕ. Кунта ачасем тавралăха сăнас, тĕпчес тĕлĕшпе сахал мар ĕç турĕç: хамăр тăрăхри пĕвесен "сывлăхĕпе" интересленчĕç, вăрмансене çитсе кунти ӳсентăрансене тата чĕр чунсене сăнарĕç. Ачасене çак ĕçсене тума вĕрентсе, хăнăхтарса пыракане лагерь ертӳçи В.В. Дашков пулчĕ. Тĕпчев ĕçĕ ачасемшĕн пĕрре те кичем пулмарĕ, мĕншĕн тесен вĕсем нумай чухне вăйă формипе иртрĕç.

Хамăр таваралăха тĕпченипе кăна çырлахмарĕç çамрăк экологсем, çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче Шупашкара "Экология" наукăпа тĕпчев институтне çул тытрĕç. Институт пурнăçĕпе, ĕçĕпе ачасене учреждени директорĕн çумĕ Ю.Н. Баева паллаштарчĕ. Çут çанталăк пуянлăхĕсемпе усă курассине йĕркелекен уйрăм пуçлăхĕ, биологи наукисен кандидачĕ В.И. Балясный ачасене çут çанталăка упрас тĕлĕшпе республика шайĕнче мĕнлĕ ĕçсем туса пынине каласа пачĕ, çак аслисемпе пĕрле ачасем те хастар хутшăнсан лайăх пулмалла терĕ. Сыпай шкулĕнче вĕренекенсем çак ыйтупа пĕрремĕш çул кăна мар ĕçленине пĕлсен ачасене мухтарĕ, ăнăçупа ӳсĕмсем сунса асăнмалăх хăйĕн "Рекомендации по созданию и содержанию зеленых насаждений" кĕнекине парнелерĕ. Кунта пулни ачасене çут çанталăка татах тарăнтарах, нумай енлĕн тĕпчеме хавхалантарĕ.

Ачасем институтпа сывпуллашса Атăл хĕрне çул тытрĕç, унăн илемĕпе киленчĕç. Анчах тăван тавралăх илемне мĕн çитĕ-ши? Çак илем ан çухалтăр тесен ăна упрамалла. Çакăн пек ыйтупа ĕçлерĕ Сыпайри "Надежда" экологи лагерĕ.

Катя ЯКОВЛЕВА.
Сыпай шкулĕ.

6 уйăх пĕтĕмлетĕвĕпе ирттернĕ канашлуран

Умра пĕр çул – малалла тата ӳсĕмлĕрех

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Халĕ, акă, выльăх апатне хатĕрлес тапхăр пырать. Хĕл каçа выльăх-чĕрлĕх продукцине мĕнле илесси шăпах паян çак ĕçе вăхăтра тата пахалăхлă туса ирттернипе тачă çыхăннă. Çӳлерех асăннă хуçалăхсенчен хăшĕсем ку ĕçре те чăхăмлаççĕ. Ленин яч. хис., "Лидер", К. Иванов яч. хис., "Передовик" хуçалăхсенче симĕс ĕççи хăвăртлăхĕ пĕчĕк.

Ленин яч. хис. хуçалăх ертӳçи А. В. Гаврилов хăй каланă тăрăх, выльăх апачĕ хатĕрлес тапхăр ăнăх мар пырать. Кăтартăвĕсене района вырăнти специалистсем йăнăш панă-мĕн.

– Утă ăнăх тесе каламастăп. Сенажа та нумай ӳсекен курăксенчен 700-800 тонна хатĕрлетпĕр, кĕçех пĕр çул ӳсекен курăксенчен хатĕрлеме пуçлатпăр ăна, – терĕ Андрей Владимирович. – Кĕр тыррисем валли 100 гектар çĕр сӳрелерĕмĕр.

Кăçал чылай хуçалăхсенче фуражлăх тырă ир пĕтрĕ. Çавăнпа та Юрий Александрович Андрей Владимировича иртнĕ çул кĕр тыррине 100 гектар çинче мар, 200 гектар çинче акнă пулсан, фуражлăх тырă çителĕклĕ пулатчĕ, продуктивлăх чакмастчĕ тени районти пур хуçалăхсене те пырса тивет: кăçал кĕр тыррине ытларах лаптăк çинче акса хăварма хистет.

Юрий Александрович лару-тăру "Передовикра" халь асăннă хуçалăхринчен те йывăртараххине асăнчĕ:

–Хуçалăхăн ятне улăштармалла мар-ши вĕсен ĕç результатне кура, – текен сăмахсенче "Передовиксен" ĕç-пуçа лайăхлатмалли пур мерăсене йышăнмалла тенине пĕлтерет.

Сăмаха урăх шухăш çине куçариччен район пуçлăхĕн çак сăмахĕсене те илсе кăтартас килет:

–Вунă çул ĕнтĕ сенаж тесе силос хатĕрлетпĕр.

"Ударникпа" "Герой" силоспа сенаж хатĕрлеме консервантсем туянчĕç. 13 хуçалăхра закваскăпа усă кураççĕ. Çав хушăрах "Чемеево", "Рассвет", Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче силос хатĕрлемелли технологие пăхăнмаççĕ. Иртнĕ çулсенчи лару-тăру ку ĕç çине пӳрне витĕр пăхма юраманнине кăтартса парать.

Продуктивлăх çинчен каласатпăр пулсан, выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессине те пĕтĕм ытти ĕçсемпе харăсах тумалла. Хальлĕхе вара 25 ĕне ферминчен 8шĕнче, 24 сысна ферминчен 10шĕнче çеç дезинфекципе юсав ĕçĕсене пуçланă.

Кĕçех тыр-пула пухса кĕртес тапхăр та пуçланать. Кĕр тыррисем пулса çитнĕ (ĕнер Ильич яч. хис. хуçалăх вырма ĕçне пуçларĕ). Апла пулсан хуçалăх ертӳçисен пуçне ыраттаракан тепĕр ĕç хушăнать. Тĕрĕссипе, вăл тахçанах канăç памалла мар ĕнтĕ вĕсене: тыр-пул пухса кĕртмелли техникăна хатĕрлесе çитермелле, çунтармалли-сĕрмелли материалсем çителĕклĕ пулччăр, ĕçлекен çынна йĕркеллĕ ĕçлесе илмелли условисем туса памалла. "Свобода", "Ударник", "Оринино", Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче комбайнсене уя тухма хатĕрлесси çине тимлĕ пăхаççĕ пулсан, "Сеятель", К.Иванов яч. хис., "Рассвет", Ленин яч. хис. хуçалăхсенче ун чухне те пăтăрмахсем сиксе тухма пултараççĕ. Канашлура "Сеятель" хуçалăх ертӳçи А. Ю. Соловьев (асăннă хуçалăхра паян кашни ĕнерен вăтамран 5,6 килограмм сĕт сăваççĕ. Район пуçлăхĕ каланă тăрăх, ку республикăри чи ăнăх кăтартусенчен иккĕмĕшĕ пулать.) çапла каларĕ:

– Нискассисем вăрах пуçтарăнаççĕ те, ĕçне пуçăнсан, сиккипех каяççĕ, – терĕ. Сенаж хатĕрлеме пуçласси пирки ку сăмах. Çĕмрĕк комбайнпа уя тухса кайсан, кĕрлеттерсе тырă пуçтарса кĕртме пулманнине шута илмеллех пулĕ çӳлерех асăннă хуçалăхсен те. Старта чылай маларах хатĕрленсе тухакан финишра та намăс курмастех. Кирек епле ĕçе те тĕплĕн хатĕрленсе вăхăтра тухнинчен ырри мĕн пултăр.

Канашлура Юрий Александрович кăçал пулма пултаракан тепĕр проблемăна та асăнчĕ. Кăçал тырра комбайн патĕнчен типĕтсе кĕме кансĕртерех пулма пултарать. Çавăнпа та тивĕçлĕ вариантсем пирки халех шутлани вырăнлă.

ТĂРĂШСАН, ӲСĔМСЕМ ТЕ ÇУМРАХ

Ытти отрасльсенчи çитĕнӳсем вара, Юрий Александрович калашле, чăннипех те, тӳрех куçа курăнаканскерсем. Промышленноçра иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 70, 6 процент чухлĕ ытларах продукци кăларнă. "Сеспель" акционерсен хупă обществи кăтартăва 2 хут ытла ӳстернĕ. Урăхла каласан, кунта района туса кăларакан промышленность продукцийĕн 60 процентне хатĕрленĕ. Муркашри кирпĕч завочĕ те иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 8 хут ытларах продукци реализациленĕ.

Суту-илӳ ĕçченĕсем те палăрмаллах ăнăçлă ĕçленĕ: кăтартăва малтанхинчен 33 процент ӳстернĕ. Районти кашни çын пуçне районĕпе вăтамран 6448,4 тенкĕлĕх тавар сутнă.

Кунта çакна та каласа хăвармалла. Халăхăн пурнăç шайне ӳстерме "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн кредит пани те палăрмаллах пулăшать. 498 граждана 76042 пин тенкĕлĕх кредит панă килти хушма хуçалăха аталантарма е пĕр çын пуçне вăтамран 152 пин тенкĕлĕх.

Хатĕрлев ĕçĕнче те ӳсĕмсем аванах: 13 процент ытларах. Ял çынни туса илнĕ ял хуçалăх продукцине вырнаçтарассинче малашне ял хуçалăх кооперативĕсем те пысăк тӳпе хывĕç. Районта вĕсене 17 йĕркеленĕ те ĕнтĕ.

Тӳлевлĕ пулăшусем парассипе пĕтĕмĕшле кăтарту 5,7 процент хăпарнă пулсан, "Моргаушрайбыт" 35,6 процент чухлĕ хăпартнă ĕç калăпăшне. Палăртмалла, тӳлевлĕ пулăшу парассин ытларах пайĕ – 61 проценчĕ – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тĕлĕшĕнчи пулăшусем.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра тата строительствăра та утăмсем малаллах. Кăçалхи çур çулта инженерипе инфраструктура объекчĕсене тума тĕрлĕ укçа-тенкĕ çăл куçĕсенчен пĕлтĕрхи çур çулхинчен 26 процент ытларах инвестициленĕ. Уйрăм çуртсене те 16 процент нумайрах хăпартнă: 11650 тăв. м. Çак хушăра вырăнти бюджет укçи-тенкипе 3,53 километр çул тунă тата юсанă, вĕсенчен 1,04 километрĕ – çĕнĕ çулсем.

Пĕтĕм шайри бюджета налуксене малтанхинчен 19 процент ытларах тӳленĕ. Район бюджечĕн тупăшĕ те çур çулта пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 26,7 процент чухлĕ пысăкрах пулчĕ.

Районти вĕренту, сывлăха сыхлас ĕç, культура сферинче те кăçал черетлĕ çĕнĕ утăмсем тунă.

–Тунă çитĕнӳсемпе лăпланмалла мар, çитменлĕхсене пĕтермелле – çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç канашлăва пуçтарăннисем. Урăхла мĕнле пултăр-ха?

Л. ПАВЛОВА.